**Елчĕк районĕнчи Таяпа Энтри ялĕнче çуралса ӳснĕ Юрий Оленкин кĕркунне 44 çул тултармаллаччĕ. Шел те, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ, философи наукисен кандидачĕ йывăр чире пула пирĕнтен çулталăк каялла уйрăлчĕ.**

Юрий Владимирович чăвашсен пирвайхи олимпиецĕ Ардалион Игнатьев тата Раççейри пĕрремĕш этнопедагог-академик Геннадий Волков пекех Елчĕкри вăтам шкулта вĕреннĕ, вĕсенчен тĕслĕх илсе ăста спортсмен тата ăсчах пулма ĕмĕтленнĕ. 15-16 çулта чухнех Таяпа Энтри каччи район чысне футболла выляссипе тата çăмăл атлетика енĕпе хӳтĕленĕ. Ялти шкула кĕмĕл медальпе пĕтернĕ хыççăн Юрий ЧПУн истори факультетне вĕренме кĕнĕ.

Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн мал ĕмĕтлĕ çамрăк университетăн физкультурăпа спорт кафедрин лаборантĕнче ĕçлеме пуçланă, тепĕр çулхине куçăмсăр майпа аспирантурăра пĕлӳ илме тытăннă. Вун пилĕк çул каялла Юрий Владимировича «Ульяновец» спорт клубĕн канашĕн тата Чăваш Республикинчи студентсен спорт общество организацийĕсен союзĕн председательне суйланăччĕ. Вăл физкультурăн кăмăл-сипет тата сывлăх диалектики темăпа ăслăлăх ĕçĕсем çырнă, вĕсем журналсенче тата университетăн тĕрлĕ кăларăмĕнче пичетленнĕ. Пилĕк çул каялла Юрий Оленкин диссертацие ăнăçлă хӳтĕленĕ. Виçĕм çул ăна ЧПУн физкультурăпа спорт кафедрин заведующине çирĕплетнĕччĕ.

Çак кунсенче ЧПУн спорт клубĕн канашĕ тата университетăн проректорĕ, «Елчĕк ен» ентешлĕхĕн ертӳçи Олег Викторов ертсе пынипе Шупашкарта Юрий Оленкина асăнса спорт мероприятийĕ йĕркелерĕç. Футболистсен юлташла тĕл пулăвĕнче Юрий Владимировичпа пĕрле вĕреннĕ, ĕçленĕ юлташĕсем тата «Елчĕк ен» хастарĕсем вылярĕç. Интереслĕ матч «Университет» команда Елчĕксене 7:3 шутпа çĕнтернипе вĕçленчĕ.

**Петр СИДОРОВ. Газета «Хыпар». 2013. 25 июля.**

{gallery}novosty/2013/11/240713{/gallery}

**Фото Геннадия ВЕРБЛЮДОВА.**